

**Анатолий ЮМАН**

# УЛĂП

1956 çулта мана Шупашкара çамрăк писательсен канашлăвне пыма йыхрав турĕç. Чăвашсен шĕкĕр хулинче унччен маларах пĕр хутчен пулса курнăччĕ-ха. Ун чухне эпĕ хамăр ентеш-писатель Владимир Садай патĕнче чараннăччĕ. А. Артемьев, Илпек Микулайĕ, Уйăп Мишши, Валентин Урдаш, Иван Пиняев писательсемпе тĕл пулни тарăн йĕр хăварнăччĕ. Ара, эпĕ чĕрĕ писательсене пуçласа курнă-çке-ха. Кĕнеке çыракансем маншăн яланах тĕлĕнмелле асамлă чунлă çынсем пек туйăнса тăратчĕç. Куннехинче тĕлпулура тăван литературăн мĕнпур çăлтăрĕсем пулмалла. Пире, аякран килнисене, «Атăл» хăна çуртне вырнаçтарнăччĕ. Çав канашлăва пырсан курнăччĕ те ĕнтĕ эпĕ Ухсай Яккăвне. Çапах та паллашасси лару залĕнче мар, каярах пулчĕ.

Канашлу вĕçленнĕ хыççăн хăна çуртĕнче пĕр пӳлĕмре вырtса тăракан Порецки вырăсĕ Владимир Грибанов поэт, «Ан хумхан, çăкалăх» юрă авторĕ Федор Тихонов (пысăк алçырăвĕнчен унăн çав сăввине пичете пама суйласа илнĕччĕ) т. ыт. темиçе çамрăк автор урамра ăнсăртран Ухсай Яккăвĕпе тата унăн мăшăрĕпе Мария Дмитриевнăпа тĕл пултăмăр. Курса калаçас тенĕрен, Яков Гаврилович пире хăйсен хваттерне кĕрсе тухма йыхрав турĕ. Ун чухне Ухсайсен хваттерĕ «Атăл» хăна çуртĕнчен инçех марччĕ. Самантран эпир вĕсем патне çитсе те тăтăмăр. Тараватлă хуçасем пире салтăнтарса сĕтел хушшинех лартрĕç. Сĕтел çине вĕри яшка антарса лартнă май, Мария Дмитриевна мăшăрĕн мăйне шурă салфетка çыхса ячĕ. Пире пурсăмăра та «вăтанмасăр, килти пек» апатланма сĕнчĕ.

Эпĕ хваттер ăш-чиккине пăхса çаврăнатăп. Пысăк та çутă пӳлĕм. Стена çинче поэтăн Макаров художник пир çине çуллă сăрпа ӳкернĕ пысăк портречĕ. Çав портрет репродукцине «Ялав» журналта курнă пек астăватăп. Залра пианино та пур. Ухсайсен икĕ хĕрача иккен. Эпир пырсан вĕсем юнашар пӳлĕме кĕрсе çухалчĕç.

Кĕрекере шăкăл-шăкăл калаçса ларнă май Яков Гаврилович пирĕн çинчен тĕплĕн ыйта-ыйта пĕлчĕ. Шăпах çавăн чухне аса илтертĕм те ĕнтĕ эпĕ ăна Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пĕрле ĕçленĕ тусĕ çинчен.

— Ирбахтин? Андрей Иванович? Пĕлмесĕр! Епле пĕлес мар-ха? Питĕ çывăх тусчĕ вăл. Пурăнаççĕ-ха тетĕн? Çемйипех-и? Салам кала, эппин,

манран, — хавасланcах калаçма пуçларĕ манпа Яков Гаврилович.

Чĕмпĕр тăрăхне аса илме юрататчĕ вăл. Кун пек чухне сăн-сăпачĕ уйрăмах хаваслăн çутăлса илетчĕ.

Çакă ăнсăртран мар ĕнтĕ. 1935–37 çулсенче поэт Ульяновскра пурăннă. Вăл ĕмĕр пуçламăшĕнче хăйĕн тепĕр паллă ентешĕ тата тăванĕ — чăваш литературин классикĕ К. В. Иванов ĕçлесе пурăннă шкултах вăй хунă-çке-ха. Кунта Яков Гаврилович пултарулăхĕ чечекленсе çитнĕ, вăл хăйĕн пулас произведенийĕсем валли материалсем нумай пухнă.

Сăвăç Ульяновск литераторне П. Бейсова лайăх пĕлетчĕ, Николай Благов поэта кăмăллатчĕ. Ульяновскра радиопа телевидени комитечĕн председателĕнче нумай çулсем хушши ĕçленĕ Илья Николаевич Милюдина кашниччех асăнатчĕ. Ăна та Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вăл вĕрентсе кăларнă иккен. Унăн Чĕмпĕрти ытти тусĕсем хушшинче — «Ульяновская правда» хаçатра ĕçлекен журналист Игорь Антонинович Хрусталев, КПСС обкомĕн секретарĕ пулнă Владимир Николаевич Сверкалов т. ыт. те. Ятлă поэт ман енĕпе тимлĕ пулнине те çак сăлтавпа ăнлантарса памалла мар-ши? Эпĕ хампа пĕрле яланах «чĕмпĕр сывлăшне» илсе çӳренĕ-çке-ха?

Çавăнтанпа эпĕ Шупашкарта кашни çул тенĕ пекех пулнă. Писательсен пухăвĕсене, съезчĕсене пырса çӳренĕ. Отпуск вăхăтĕнче вара çырнă япаласене хаçат-журнал редакцийĕсене е кĕнеке издательствисене леçме пырсан темиçешер кун та пурăннă. Çавăн чухне Яков Гавриловича тĕрлĕ лару-тăрура курнă: писательсем хушшинче те, трибуна çинче те, Союз çуртĕнче те, редакцисен пӳлĕмĕсенче те, ĕç сĕтелĕ хушшинче те, урамра та. Манпа вăл кашниччех, пиччĕшĕ шăллĕпе калаçнă пек, кăмăллăн калаçатчĕ, асăрхаттаратчĕ, канаш паратчĕ. Хăй мана яланах «шăллăм» тесе чĕнетчĕ.

— Ăçта чарăнтăн, шăллăм? Хăна çуртне-и? Аван. Хваттерсенче çынсене чăрмантарса ан çӳре, — тетчĕ те тӳрех Чĕмпĕр хыпарĕсене ыйтса пĕлетчĕ. Юлашкинчен, паллах, калаçу литература çине куçатчĕ. Яков Гаврилович, хăй пысăк сăмах ăсти пулнăран, ыттисен пултарулăхне çав шая тĕпе хурса хаклатчĕ.

— Мĕн çыран-çĕмĕрен? Алçырăвĕ илсе килтĕм тетĕн? Аван. Чĕлхе тĕлĕшпе тăрăшарах ĕçле. Инверсисене тĕрĕс тума вĕрен. Çырнисем вăрăмрах пулса тухнă туйăнмасть-и сана? Кĕскерех çырма тăрăш.

Сăмах май çи-пуçпа ĕç-пуç çинчен ыйтса пĕлме те манмастчĕ: чухăн пурăнмастăп-и, укçа çитет-и?

— Ма кашне çыхмастăн? Пальто тăхăнсан кашне те çыхас пулать. Çын умĕнче тирпейлĕ çӳреме тăрăш, — терĕ пĕррехинче. — Санăн кунта куçса килмелле те çав... Тымарсем тарăн кайнă тетĕн? Юрĕ. Унтах пурăн. Эрех ĕçместĕн-и? Ан ĕç!

Пĕррехинче Ленин урамĕнче тĕл пулни аса килет. Вăл хăйĕн хваттерĕнчен тухнă çеç, анаталла анать.

— Эсĕ ман патăмаччĕ-и? Кайран кĕрсе тухăн. Халĕ обкома чĕнеççĕ. Атя столовăя, апат çитерсе ярам.

Апачĕшĕн вара ирĕксĕрех маншăн та хăех тӳлерĕ.

Поэт хăй кĕнекисене парнеленĕ чух çырнă автографсенче те пирĕн

сайра хутшăнусен витĕмĕ палăрать пек ман шутпа. Акă çав маншăн хаклă йĕркесем: «Анатолий Ермилова — шăллăма. Я. Ухсай.Шупашкар. 28.XI.1956» («Самана», 1956 ç.); «Молодому талантливому поэту Анатолию Ермилову. Я. Ухсай. 25.IX — 1958». («Дед Кельбук». Издательство «Художественная литература, 1956); «Юман шăллăма ырă çеç сунса — Я. Ухсай. Апрель, 2.1984 ç.» («Ача чухнехи çăлтăрăм». Трилогиі. 1973 ç.); «Юман шăллăма унти йĕкелĕсем шултра та тутă пуласса шанса. Я. Ухсай. Апрель, 1974 ç. Шупашкар» («Суйласа илнисем». I том); «Чунĕпе те ăсĕпе илемлĕ, тĕреклĕ Юман тусăма — Я. Ухсай. Шупашкар. 20.IX.1983 ç.» («Суйласа илнисем». II том); «Анатолию Юману в память об Ульяновске. Я. Ухсай. 2 апреля 1974 г.» («Избранное». Москва. Издательство «Художественная литература», 1983 г.); «Анатолию Юману по-дружески — Я. Ухсай». («Стихи и поэмы». Издательство «Советская Россия». 22.IX — 1983); «Юман тусăма. Я. Ухсай. 16.II.1980» (К. Иванов. «Избранное» Издательство «Советская Россия», 1974 г.)».

Ахальтен мар ĕнтĕ Писательсен союзне кĕме шутланă май эпĕ чи малтан Яков Гавриловичпа канашласа пăхма шутларăм. Вăл часах çав кирлĕ хута мана çырупа ярса панĕ. Çаврака та вĕтĕ саспаллисемпе çырнă йĕркесене хумханса вуласа тухатăп. Акă вăл:

«За последнее десятилетие в чувашской поэзии весьма заметно бросается в глаза, тревожит душу количественный рост профессиональных авторов, ставших коренными горожанами, изредка по творческим командировкам Литфонда и путевкам Бюро по пропаганде литературы выезжающих в деревню, и осенью, и зимою воспевающих красу деревенской весенней природы и соловьиные трели. Такой количественный рост порождает низкий качественный уровень стихотворной продукции, язык становится бедным и вялым, теряется смысловой вес слова, трескучие стихи вытесняют эпический жанр, что призван показывать трудовые и психологические характеры людей, богатырский духовный размах народа.

В количественном росте творцов чувашской поэзии заметно выделяется Анатолий Ермилов (его литературный псевдоним Юман). Обещает он быть не стихотворцем, а поэтом в настоящем смысле этого слова. Работая в редакции районной газеты и находясь в самой народной гуще, он продолжает по содержанию и форме гражданственность Константина Иванова.

Я не стану перечислять названия его книг, рекомендую его в члены СП СССР, прошу предостеречь свое творчество от ломки строя языка, ради ритма и рифмы не губить стихи и поэмы инверсиями, с совестью и уважением и любовью относиться к родному языку. Это будет и душевным, и трепетным отношением и к своему народу, творцу всех духовных сил, в том числе и языка.

Псевдоним Юман, что значит Дуб, обязывает Анатолия творить и чеканить стихи ядреные, как желуди.

Я. УХСАЙ,
чл. СП СССР с 1938 г.

7 августа 1977 г.»

Ятлă сăвăçăмăр ман пирки калама çапла ăшă сăмахсем тупни хавхалантарчĕ те, çунатлантарчĕ те. Хăй вăл литературăна чи сăваплă ĕç вырăнне хурса хаклатчĕ. Сăвă таврашне чĕре витĕр кăлармасăр алла перо тытман. Шедеврсем ахаль çуралмаççĕ. Ку такама та паллă. Сăмах ăсти пулнă май, ыттисенчен те çирĕп ыйтатчĕ пиччемĕр. Калас тенине чăнлăха тĕпе хурса, яланах тӳрремĕн калатчĕ. Хăй шухăшне нимĕнле авторитет умĕнче те улăштарман. Çапла ара... Ăсталăх ыйтăвĕпе яланах принциплăччĕ. Унăн кулăшла та сăнарлă каланă сăмахĕ яланах тĕл тиветчĕ: тӳссен — тӳс, тӳсеймесен — çурăлса кай! Çакна ăна пĕлнĕ çынсенчен чылайăшĕ курса ĕненнĕ темелле. «Çĕнетӳ тапхăрĕнче пирĕн пурин те ĕçлеме тата пĕр-пĕрин ĕçне хаклама акă камран вĕренмелле...» — текен шухăш мана халĕ уйрăмах час-часах канăç памасть.

Анчах çитмĕлмĕш çулсенех таврăнар... Союза кĕрес ĕç вăраха тăсăлнăран, кайран çак хутах датине улăштарса тепĕр хут куçарса çырма тиврĕ унăн.

Пĕринче эпĕ ĕçрен кăнтăрлахи апата таврăнтăм. Килте никам та çук. Газ плити умĕнче кăштăртатнă хыççăн сĕтел хушшине ларма ĕлкĕртĕм çеç, такам чӳречерен шаккарĕ. Пăхатăп та, пĕрле ĕçлекен юлташăма палласа илетĕп. Эпир унпа ларасса та пĕр пӳлĕмрехларатпăр-ха. Уйрăласса та тин çеç уйрăлнăччĕ. Эпĕ апата тухса килес умĕн вăл хăйĕн вĕçлеймен ĕçĕпе аппаланса юлнăччĕ мар-и. Халĕ акă ман хыççăнах вĕçтерсе çитрĕ. Тем пулман пуль те?

Çынни вăл вырăс. Анчах чылай çулсем хушши пĕрле ĕçлесе пурăннăран манпа чăвашла те перкелешет. Перкелешни-мĕнĕ, вырăсла калаçнă хушăрах хăй ăнкарнă сăмахсене чăвашла савăлласа лартса кăсăклантарса илет.

— Юман, чазырах! Хыназем бур! — тет çакскер. Юлашкинчен тӳсеймесĕр хушса хурать: — Ухсай приехал!..

Çапла. Шупашкар хăнисене эпир тахçантанпах кĕтетпĕр-ха. Ĕç акă мĕнре. Чăвашкасси ялĕнче иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче И. Я. Яковлев пуçарса тăрăшнипе туса лартнă пуçламăш шкул пур. Аслă просветителĕмĕр витĕм панипе чечекленнĕ е вăл хăй тӳрремĕнех хутшăннипе уçнă шкулсем пирĕн тăрăхра пĕрре кăна та мар. Йышлă вĕсем. Ял халăхĕ кашнине сăваплă палăк вырăнне хурать, çĕнĕ ăрусем валли упрать. Чăвашкасси шкулне илсен, ун пирки çакна каласа хăвармалла: ялйыш çине тăнипе Ульяновск облĕçтăвкомĕ кунта Иван Яковлевич Яковлева чысласа асăну хăми уçма йышăннăччĕ. Тĕрлĕ сăлтава пула ĕçĕ вăраха тăсăлчĕ. И. Я. Яковлев çуралнăранпа 135 çул çитнĕ май вара ялйыш уява хатĕрленчĕ. Чăваш çĕршывĕнчи культура ĕçченĕсене çав уява килме йыхрав тунăччĕ те. Яковлев кунне палăртма Чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ те кăмăл турĕ. Çак хыпар пурсăмăра та савăнтарчĕ, паллах. «Вырăсланнă» чăвашсем те пирĕн ĕç-пуça хисеплени сисĕнет. Ара, паллă сăвăçăмăра республика тулашĕнче те пĕлменни çук-çке. Чăвашсем çеç-и! Вырăссем те, чăваш литератури çинчен сăмах пуçарсан, чи малтан ăна аса илеççĕ. Районта ăна астăвакансем те сахал мар. Вăл вĕрентсе кăларнă, паян та ыр-сывă пурăнакан ентешсене эпир çирĕме яхăн шутласа

кăлартăмăр. Вĕсене пурне те тĕлпулăва хутшăнма йыхрав турăмăр. Эпир шутланă тăрăх, хăнасем ыран килсе çитмелле. Халĕ акă...

Утнă çĕрте утса, чупнă çĕрте чупса тенĕ пек редакцие вирхĕнсе çитетĕп. Кунта чăнах та хура «Волга» ларать. Ку — хăнасен кӳми. Хăйсене эпĕ редактор пӳлĕмĕнче тупатăп. Хама лăпкăнрах тытма тăрăшса сывлăх сунатăп. Ухсай пиччемĕр çулсен йывăрлăхне парăнмасть-ха. Хăмăр костюмпа вăл. Хура çӳçĕ чăпарланнă пулин те, пичĕ-куçĕ çутă хаваслăхпа çиçет. Яланхи пек сăмаха кĕскен тата-тата калаçать, каласа яриччен вĕсене, халăхăмăр вĕрентнĕ пек, малтан виçсе пăхать тейĕн. Çитменнине хаçатсенче куллен пичетленсе «якалса çитнĕ» сăмахсем мар вĕсем, халăх хăй хайланăран сĕткенлĕ те асра юлаканскерсем.

Пирĕн калаçу пулас уяв çинчен. Яков Гаврилович хăйĕн çамрăклăхĕпе çыхăннă Ленин çĕршывне — Ульяновск хулине çитсе курасшăн иккен, çавăнпа ытти хăнасенчен маларах тухса килнĕ. Çитменнине унта Ленин ячĕпе çыхăннă Мемориал зонине тăвас ĕçсем малалла пыраççĕ. Çав зонăна пирĕн И. Я. Яковлев ĕçлесе пурăннă шкул çурчĕсемпе килкартине те кĕртнĕ. Хаçатсенче И. Я. Яковлевăн малтанхи хваттерне тупса палăртни çинчен те çырнăччĕ. Майлă самантпа усă курса епле унта çитсе курас килмĕ?

Редактор пӳлĕмĕнче Яков Гавриловичпа пĕрле икĕ çамрăк ларать. Вĕсем — «Советская Чувашия» хаçатри культура пайĕн пуçлăхĕ, Ухсай Яккăвĕн «Тутимĕр» трагедине вырăсла куçараканĕ, эпĕ лайăх пĕлекен писатель Аристарх Дмитриев тата «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн фотокорреспонденчĕ Юрий Дмитриев иккен.

Хăнасене юнашар столовăйне ертсе каятăп. Апатланса таврăнсан редакци умне кунта ĕçлекенсемпе типографи рабочийĕсем хăпса тухрĕç. Пурте ятлă сăвăçпа курса калаçасшăн. «Вырăсланнисем» те чăвашла чиперех пĕлеççĕ иккен. Асăнмалăх сăн ӳкерттеретпĕр. Унтан Ульяновск еннелле çул выртрĕ.

Çулăн икĕ енĕпе те вĕççĕр-хĕрсĕр уй. Çуртрипе кĕр тырри калчисем, сахăр кăшманĕн уйĕсем, вăрман тăрăхĕсем, ялсем лара-лара юлаççĕ. Эпĕ хăнасене пултарнă таран ăна та, кăна та каласа ăнлантарма тăрăшатăп. Гид вырăнĕнчех.

Хулара эпир чи малтанах сăвăç пĕлĕшне — «Ульяновская правда» хаçат редакторĕн заместительне Игорь Антонинович Хрусталев журналиста шыраса тупрăмăр. Пăртак калаçса ларнă хыççăн вăл пире хаçат редакторĕ патне ертсе кĕчĕ. Паллаштарма. Сăмах çине сăмах. Игорь Антонинович реставраторсен ĕçĕ-хĕлне лайăх чухлать-мĕн. Кирлĕ çĕре шăнкăравларĕ кăна — специалисчĕ те тупăнчĕ. Куннехинче вăл пирĕншĕн гид вырăнне пулчĕ. Текех ĕнтĕ ушкăнран Игорь Антонинович та хăпмарĕ. Унăн та пире каласа кăтартмалли çук мар.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ... Иртнĕ ĕмĕртенпе çак асамлă сăмахсем тĕрлĕ ăрури чăваш чĕринче шанчăк та ырă туйăм çуратнă, çунатлă ĕмĕт пиллесе çич тӳпене çити çĕкленĕ. Мĕнех вара, кĕтни сая кайман! Ырă вăрлăх çимĕçĕнчен тулăх та патвар хунавсем шăтса тухрĕç. И. Я. Яковлев шкулĕн никĕсĕ çинче чăваш культури тĕвĕленсе вăй илчĕ, вăл

ку чухне хӑй ҫинчен пӗтӗм тӗнче илтмелле калаҫтарать. Ак епле!..

Нумай ырӑ туйӑмсем ҫуралчӗҫ чӗресенче чӑваш литературипе культурин малтанхи ҫӑлтӑрӗсене ҫӗкленӗ сукмаксем тӑрӑх иртсе ҫӳренӗ май. Халлӗхе кунта шӑплӑх хуҫаланать, ӗлӗкхи ешӗл ҫереме вӗлтӗренсемпе хупахсен «ҫарӗ» сырса илнӗ, кивӗ ҫурчӗсем юхӑнса ҫитнӗ, ӗнтӗ вӗсен стенисем ҫеҫ юлнӑ темелле, пушӑ е ваннӑ чӳрече кантӑкӗсем витӗр ҫил тӑлӑххӑн вылять. Ҫапах та ку вӑхӑтлӑх сырланӗ кӑна пулса иртнине мантарасшӑн. Ун вырӑнне унта та, кунта та Асӑну хӑмисене куратӑн. Малашне вӗсем ҫумне халӗ пирӗнпе утса ҫӳрекен Ухсай пиччемӗре халаллани те юнашар ҫӗкленӗ. Ман чӗрере ҫак шухӑш ҫинеҫинех ҫиҫсе илет. Ҫамрӑк ӑру ӑстӑнӗпе типтерлӗхӗ часах ҫак кӗтесре ҫӗнӗрен пурнӑҫ хӑватне чӗртсе ярӗҫ. Кунта каллех халӑх юхӑмӗ килсе ҫапӗ. Ҫак самант килсе ҫитесси нумай юлман ӗнтӗ. Ахальтен мар кунта кашни чул Иван Яковлевичпа ун патне тӑтӑшах килсе ҫӳренӗ Илья Николаевича, унӑн ырӑ ҫемйине астӑвать, ҫав шутрах Володя Ульянов гимназиста та. Пире Константин Ивановӑн сасси, Федор Павловӑн асамлӑ сӗрме купӑсӗ тепӗр хут янраса кайнӑнах туйӑнчӗ. Халӑх асне яланлӑхах кӗрсе вырнаҫнӑ ытти ҫутӑ сӑнарсене те вӑратса ҫӳрерӗмӗр эпир кунта. Уйрӑмах Ухсай пиччен аса илмелли тупӑнсах тӑрать. Вӑл хӑй — историн пӗр пайӗ.

— Ак ҫак ҫуртра эпӗ хваттерте пурӑннӑ, — калаҫать Яков Гаврилович шкул картишӗ ҫумӗнчи сар сӑрпа сӑрласа лартнӑ кивӗ йывӑҫ ҫурт ҫумӗпе иртсе пынӑ май. Малалла утатпӑр.

— Ак ҫак ҫуртра эп астӑвассах лавккаччӗ, — терӗ сӑвӑҫ сасартӑк уйрӑмах хавхаланса.

Вӑл килкарти тулашӗнчи урамра тунсӑхласа ларакан кивелсе ҫитнӗ, шупка хӗрлӗ тӑмпа сӑрланӑ чул ҫурта кӑтартрӗ. Икӗ хутлӑ ҫурт... Тинкеререх пӑхсан малтан вӑл пӗр хутлӑ ҫеҫ пулнине тавҫӑрса илме йывӑр мар. Иккӗмӗш хутне, чӑнах та, кайран ҫӗклесе лартнӑ иккен. Вӑл малтанхинчен хӑйӗн сӑрӑ тӗсӗпе те уйрӑлса тӑрать. Малалла Яков Гаврилович пире шухӑшлӑн ҫапла пӗлтерчӗ:

— Ҫак лавккана Ульяновсен няни — Варвара Григорьевна Сарбатова краҫҫын илме ҫӳренӗ. Ҫав хушӑрах Ульяновсемшӗн чи йывӑр вӑхӑтра килйыш тертне пӗрле тӳссе ирттернӗ...

Кивӗ ҫуртра халӗ те лавкках иккен. Кантӑкӗнчен витрина ҫинчи канфет-пӗремӗк курӑнать. Эпир пынӑ чух лавккана апата хупнӑччӗ, шала кӗрсе кураймарӑмӑр.

Тӗпчевҫӗсем Яковлевӑн малтанхи хваттерне те тупса палӑртнӑ терӗмӗр. Килкарти тулашӗнчи ҫав шурӑ та пӗчӗк чул ҫурт патне пырса пӑхатпӑр. Вӑл Иван Яковлевичӑн юлашки вӑхӑтра пурӑннӑ хваттерӗнчен инҫех мар вырнаҫнӑ. Реставратор-специалист пулас ӗҫсен калӑпӑшӗ ҫинчен тӗплӗн, васкамасӑр, ӑнланмалла каласа кӑтартрӗ.

...Акӑ вӑл, Чӗмпӗр вучахӗ! Эпир унӑн варринче тӑратпӑр. Ҫакӑнтан таврари чӑваш ялӗсене ӑслӑлӑхпа пӗлӳлӗх кӑварӗ сирпӗннӗ. Вӑл ӑҫта ӳкнӗ — унта амаланса тӗттӗмлӗхпе мӗскӗнлӗхри ҫынсен чӗрисене хӗмлентернӗ, калаҫтарнӑ, хавхалантарнӑ, малалла чӗннӗ, ҫуталла, пӗлӳ

патне ăнтăлма хистенĕ. Çакна палăртма кăмăллă: вăхăт иртнĕçемĕн чăвашсен малтанхи юратăвĕ — Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ, унта юп курса вăй илнĕ яш-кĕрĕмсен сасси манăçа юлмасть, çывăхлансах пырать, ăна тимлесе итлеме кăна пĕлмелле. Çакă çĕнĕ ĕмĕр çыннисене малтанхисем пуçланă ырă ĕçе килес саманара çĕнĕ шая çĕклесе йышлатса пыма хавхалантармасть-и-ха!

— Хамăр ĕçе вĕçлесен килсе курăр эсир кунта, — тет реставратор-специалист, хыткан ӳт-пӳллĕ те сăмси урлă çутă пайăркисенчен хӳтĕленмелли çăмăл куçлăх уртса янă вăтам çулсенчи арçын. Тумланасса та вăл çуллахи чи шăрăх кунри пек çăмăл тумланнă: çийĕнче кĕске çанăллă улача кĕпе, лайăх якатнă çутă шăлавар...

Шкул картишĕнчи улăп тăприне аса илтерекен тăвайккисем тăрăх час-часах анса хăпарма тивет пире. Ку вăл ватă çыншăн çăмăл ĕçех мар. Çавăнпа Яков Гавриловича час-часах хулĕнчен тытса пулăшса пыма тивет. Анчах кам шутланă çавăн чух сăвăçăмăр çак хăй çамрăк чухнех юратса пăрахнă сăваплă кĕтесре юлашки хут утса çӳрессе?

Реставратор-специалист сăмахĕсем ăна хумхантарнине туйса илме йывăр мар. Тинех И. Я. Яковлев чун кĕртнĕ тăван культура сăпки — Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн çурчĕсем хăйсен малтанхи сăнĕпе ялтăрас самант та инçе мар-çке! Хастар ăстаçăсен ырă та сăваплă ĕçĕн пуçламăшне эпир хамăра Сĕве хĕррине илсе çитернĕ урампа иртнĕ чухне те курма ĕлкĕрнĕччĕ-ха. Авалхи чул çуртсем чĕрĕлĕх шывĕпе çăвăнса çĕнĕрен çамрăкланнă пекех курăнса ларатчĕç унта. Часах акă кунта та çав чĕрĕлĕх шывне илсе çитерĕç асамлă ăстаçăсем...

Вăрахчен сывпуллашрăмăр эпир Сĕве хĕрринчи улăп тăпри пек сăрт çинчен тăван халăхăмăра çутта кăларнă аслă çын халалласа хăварнă хаклă тупрапа — Чĕмпĕр вучахĕпе.

...Кунта «вăхăт кӳми» мана шăп та шай 1983 çулхи майăн 13-мĕшне илсе çитерет. Эпир Шупашкар хăнисемпе пĕрле тахçан ĕлĕк Чăвашкасси ялне И. Я. Яковлев килсе кĕнĕ çулпа вăл кунта иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче çĕклесе лартнă пуçламăш шкул çурчĕ патне пырса çитетпĕр. Шкул енне аякран килнĕ хăнасем пырса çитнине кура халăх та пухăнма пуçларĕ. Часах урам (ача чухне вăл мана питĕ сарлака туйăнатчĕ, курăсăн: сарлаках та мар иккен) пĕвенсе те ларчĕ. Автомашинăсем те йышлансах пыраççĕ. Кусем — район пуçлăхĕсем, ытти хăнасем килсе çитеççĕ. Яков Гавриловича тахçанах ял халăхĕ сырса илнĕ. Вĕсем хушшинче вăрçăпа ĕç ветеранĕсем нумай. Кăкрисем çинче медальсемпе орденсем ялтăртатаççĕ. Ялти чи ватă «шурсухала» илме яратпăр. Вăл Яковлев шкулĕнче чи малтанхи çул вĕреннĕ теççĕ. Халĕ çĕре çывхарса пыракан сумлă мучи. Анчах та чирлĕ иккен, килеймест. Шел, Яков Гавриловича унпа паллаштарасшăнччĕ. Ара, мучийĕ вăл Иван Яковлевича хăйне те астăвать-çке...

Пурте пухăнса пĕр-пĕринпе паллашса çитсен, шкулне курса çаврăнма ĕлкĕрсен чаплă митинг пуçланчĕ. Унта хумханullă сăмахсем сахал мар пулчĕç. Шкул стени çинче мрамор хăма çакăнса тăрать. Ăна шурă пирпе витсе хунă. Часах вăл сирĕлет те, ылтăн саспаллисемпе çырнă çак

йĕркесем курăнса каяççĕ: «Шкул çуртне чăвашсен паллă просветителĕ И. Я. Яковлев 1896 çулта никĕсленĕ».

Çакăн хыççăнах шкулта класс-музей уçăлчĕ. Унта шкулпа тата И. Я. Яковлевпа çыхăннă паха документсем упранаççĕ. Ку вăл — вырăнти краеведсем çулсерен пухнă паха тупра, халăх тупри.

Официаллă пай вĕçленнĕ хыççăн хăнасем асăнмалăх сăн ӳкерттерчĕç. Кунта фотокорреспондентсен сахал мар тарлама тиврĕ. Вĕсем хушшинче Яков Гаврилович ентешĕ, «Ялавра» ĕçлекен Виталий Исаев паллă ăстаçă та пур.

Юлашкинчен шкул директорĕ Мария Михайловна Бикмендеева хаклă хăнасене ятарласа тунă кĕнеке çине автографсем çырса хăварма сĕнет. Вĕсем пĕрин хыççăн тепри сĕтел патне пырса аллисене ручка тытаççĕ. Ял хăнисен кĕнеки çинче поэт çырса хăварнă çак кĕске те чуна хумхантаракан йĕркесем упранаççĕ: «Чăвашкасси шкулĕнче ăна хаклă ят панă кун пултăм. Пĕчĕк ачасем юрлани питĕ тĕлĕнтерчĕ. Я. Ухсай. Май, 13.83».

«Редакцисем тăрăх çӳресси писатель ĕçĕ çинех кĕрет», — тесе вĕрентнĕ çамрăксене Корней Чуковский. Кун çинчен эпĕ халĕ «Литературная Россия» хаçатран пĕлтĕм. Чĕрепе хам та тахçанах туйнă-ха. Перифери тунсăхĕ — манăн ĕмĕрхи чир. Çавăнпа чĕрĕ писательпе тĕл пулса калаçма тивсен эпĕ кашнинчех, ача чухнехи пекех, çунатланса савăнатăп. Анчах та райхаçатран кирлĕ чухне хăпса тухма йывăртарах.

Куннехинче те акă Шупашкара вăрах вăхăт хушши каяймарăм. Яков Гавриловичран хăйĕнчен те хыпар-хăнар таврашĕ пулмарĕ. «Чирлесе ӳкмен-ши?» — тесе те шутласа илтĕм. Юлашки вăхăтра чирлесси пуланканччĕ унăн. Пульницара выртса тухнă хыççăн каллех тепĕр хушă хастарланса ĕçлетчĕ. Çавăнпа эпĕ çырусене хурав илейменнишĕн пăшăрхансах ӳкмен. Тепĕр тесен, кирек мĕнле писателĕн те пусма ларнă чăх пек ĕçлеме тивнĕ самантсем е чылай тапхăрсем пуррине пĕлсе тăнăран вăхăтра хурав илейменшĕн кӳренес йăла çук манăн.

Тинех акă палланă алăк хваттерĕ умĕнче хумханса тăратăп: «Килте-ши, çук-ши?». Шăнкăрав кнопки çине пусатăп. Алăк уçăлчĕ те, мана, яланхи пек, хăй мар, Оля хĕрĕ кĕтсе илчĕ.

— Атте чирленĕ-ха, канать. Тин çеç çывăрса кайрĕ. Кайрантарах кĕрсе тухăр, — терĕ вăл мана палласа илнĕ хыççăн.

Анчах çак калаçу хыççăн та эпĕ Яков Гаврилович йывăр чирпе чирленине пĕлмен. Çавăнпа та каланă вăхăтра пырсан вăл вырăнпах выртнине курса питех те тĕлĕнтĕм. Алăк патĕнче икĕ арçын мана хирĕç пулчĕç. Вĕсем поэтăн çывăх çыннисем пулчĕç куран. Тен, вăхăтсăр килсе кĕретĕп эпĕ? Тен, чăрмантаратăп та пулĕ?.. Ольга Яковлевна мана тĕпелелле иртме сĕнчĕ. Иртетĕп. Яков Гаврилович хăй кабинетĕнче алăк умне сарса панă вырăн çинчех выртать. Куçне вăйсăрран хупнă. Шурă простынь, шурă кĕпе, чăпарланса шуралнă çӳç... Пичĕ-куçĕ те хĕç пек çӳхелнĕ унăн. Йĕри-тавра çаплах кĕнеке-тусĕсем, хутсем... Çыру сĕтелĕ те кĕтсех ларать ăна. (Пушкин та хăй вилес умĕн кĕнекисемпе чĕрĕ çынпа сывпуллашнă пекех сывпуллашнă теççĕ).

Эпĕ пырса кĕрсен Яков Гаврилович куçне уçрĕ.

— Епле-ха капла, Яков Гаврилович? Мĕскер пулчĕ? — тетĕп.

— Эпĕ чылайранпа йывăр чирлĕ выртатăп... Пĕр хушă пульницара выртрăм... Халĕ акă килте... Çырăвусене хуравлаймарăм та... — терĕ вăл, эпĕ сывлăх суннă хыççăн.

Хам тенкел çинче ларатăп. Çире — Ольга Яковлевна панă шурă халат. Калаçасса сăвăç-пиччеçĕм асапланса калаçать. Вăхăтран-вăхăта куçне хупсах илет.

— Мĕнле пурăнать унта пирĕн директор? — терĕ вăл сасартăк.

Кам çинчен сăмах пынине эпĕ çийĕнчех ăнланаймарăм.

— Чăвашкассинчи Яковлев шкулĕн директорĕ... Ячĕ мĕнлеччĕ-ха?.. — аса илме тăрăшрĕ вăл.

— Э... е... Мария Михайловна Бикмендеева çинчен калатăр-ха эсир? — тавçăрса илетĕп тинех.

— Ара, çаплаччĕ çав.

— Вăл маттур-ха... Тăрăшать. Ыр-сывах... Сана салам каласа ячĕ, — тетĕп çакскер.

— Хастарлăхĕ çителĕклĕ ун. Пурте ун пек вăй хурсан аванччĕ те... Сывлăхĕ тĕреклĕ тетĕн... Юрать... Халăхăмăр лайăх çынсемпе пуян... Салам кала хăйне те...

Яков Гаврилович ӳсĕркелесе илет. Сывлăш çавăрса илнĕ хыççăн Чĕмпĕре аса илчĕ.

— Мĕн çĕмĕреççĕ унта Чĕмпĕрсем?..

— Николай Благов съезда кайса килнĕ терĕç, — пĕлтеретĕп хам илтнине. (Ун чухне Мускавра СССР писателĕсен черетлĕ съезчĕ хăйĕн ĕçне тин çеç вĕçленĕччĕ).

— Эпĕ каяймарăм... Илтрĕн-и?.. Мана правлени членне суйланă...

Кун çинчен эпĕ ирхине «Литхаçатра» вуланăччĕ-ха. Çавна май Яков Гавриловича чĕререн саламларăм. Поэт юлашки вăхăтра «Чĕмпĕр» романпа ĕçленине пĕлсе тăрса (уйрăм сыпăкĕсем «Тăван Атăл» журналта çапăнса тухнăччĕ) ăна çырса пĕтернипе-пĕтерменни çинчен ыйтса пĕлтĕм.

— «Чĕмпĕр» вĕçленеймесĕрех юлать, — терĕ те вăл каллех куçне хупрĕ.

Чирлĕ çынна калаçса ларма йывăррине туйса эпĕ сывпуллашрăм, ăна тĕрĕс-тĕкел сывалма ырă сунтăм. Ара, ку чухне шанчăксăррисене те тĕрĕс-тĕкел ура çине тăратни пулать-çке. Çапах та хальхинче шанчăкĕ çителĕксĕр пулас унăн. «Вилĕм чирĕ», — теççĕ чăвашсем. «Çавă ан пултăр», — шутларăм эпĕ каллех хулан шавлă урамне тухнă май. Çак шухăшпа ниепле те килĕшес килмест. Анчах мĕн тăвăн-ха? Пурнăç хăй йĕрĕпех шăвать. Урамра çаплах автомобильсем, çынсем хĕвĕшеççĕ. Пурте таçта васкаççĕ, пĕр-пĕрин çине çаврăнса пăхма та вăхăчĕсем çук тейĕн. Калăн, халăхăмăр пысăк çухату тӳсес хăрушлăха никам та асăрхамасть тесе...

Темиçе кунран, чăнах та, килсе çитрĕ çав хăрушă хыпар. Мана вăл аякра, хам ĕçлесе пурăнакан вырăс ялĕнче хăваласа çитрĕ.